Республика кунне уявланă май

# Шетмĕпуçĕнче те пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕ пур



Республика кунне уявланă май июнĕн 23-мĕшĕнче Шетмĕпуçĕнче те пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕ хăйĕн алăкĕсене уçрĕ. Ку тăрăхри 12 ялта 1300 ытла çын пурăнать. Вĕсенчен 47 проценчĕ çулланнă çынсем. Кирек хăçан та вĕсене медицина пулăшăвĕ кирлĕ пулма пултарать. Вырăнта пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕ пулни вара вĕсемшĕн питех те меллĕ. Кунта кирлĕ медицина пулăшăвĕ илме те, кăнтăрлахи уйрăмра выртса сипленме те май пур.

Пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмне уçма Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ, ЧР сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министрĕ Н.В. Суслонова хăй килчĕ. Вăл строительсене, кунта вăй хуракан коллектива пысăк тав сăмахĕ каларĕ, Республика кунĕ ячĕпе пурне те саламларĕ.

– Президент Республика кунне ирттерме сирĕн района ăнсăртран суйласа илмен. Чылай енпе эсир республикăра малта пыратăр. Пĕтĕмĕшле практика врачĕн çак уйрăмĕ – Республика кунĕ умĕнхи парне. Ялсенче пахалăхлă медицина пулăшăвĕпе усă курма май пурри питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ,– палăртрĕ Н.В. Суслонова.

Чăннипех те хальхи вăхăтра республика пурнăçĕнче палăрăмлă пысăк улшăнусем сахал мар пулса иртеççĕ. Вĕрентÿ, халăх сывлăхне сыхлас ĕçсенче вĕсем уйрăмах курăмлă. Республикăра кăçал кашни ял патне асфальт сарнă çулсем çитереççĕ. Ялсенче пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсемпе уйрăмĕсене 418 уçнă. 2010 çул тĕлне вĕсене уçасси вĕçленмелле.

Пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕсене уçни çавăнтан та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чирлĕ çынсене





сипленипе пĕрлех чирсене малтанхи шайра тупса палăртма, сиплев ĕçĕсене маларах пуçлама май пур. Апла пулсан сиплевĕн усси те ытларах тата эффективлăрах пулĕ.

Кунти унчченхи врач амбулаторине пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕн шайне çитерес ĕçсене Муркашри юсавпа техника предприятийĕн строителĕсем пурнăçланă. Пĕтĕмпе юсавпа строительство ĕçĕсене пĕр миллион тенкĕлĕх туса ирттернĕ. Кунсăр пуçне 200 пин тенкĕлĕх сĕтел-пукан, 170 пин тенкĕлĕх тĕрлĕрен медицина оборудованийĕ туяннă. Шăл сиплемелли кабинета паянхи кун ыйтăвĕсене тивĕçтермелле тума 290 пин тенкĕ тăкакланă. Çаксем пĕтĕмпех ял çыннисемшĕн пысăк парне пулнине палăртрĕ ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Муркаш районĕн тĕп больници» сывлăха сыхлас ĕç муниципаллă учрежденийĕн тĕп врачĕ В.Г. Данилов.

Юсавпа техника предприятийĕн директорĕ Л.Д. Дмитриев пĕр-пĕрне ăнланса, килĕштерсе ĕçлени пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. Çавна пулах ĕнтĕ реконструкци ĕçĕсене те вăхăтра тата пахалăхлă туса ирттерме май килнĕ. Пушă алăпа килмен вăл уява. Больница коллективне DVD-плеер парнелерĕ.

Ял çыннисене çак пысăк парнепе саламлакансем, строительсене тав сăмахĕ калакансем хушшинче Раççей Геройĕ Е.Г. Борисов, Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.П. Александров тата ыттисем те пулчĕç. Чăннипех те пысăк парне. Халĕ кунта врач тĕрĕслевĕчченхи, тĕрĕслев, шăл тухтăрĕн, пĕтĕмĕшле практика врачĕн, процедура, физиотерапи, сывă ача, ачасене йышăнмалли, процедура, медицина профилактикин тата ытти кабинетсем, лаборатори, аптека та пур. Ял çыннисен сывлăхне пахалăхлă сиплеме те, профилактика ĕçĕсене туса ирттерме те майсем пĕчĕк мар. Хăтлă сиплев çурчĕ çав кунах пĕрремĕш пациентсене йышăнма тытăнчĕ ĕнтĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ўкерчĕксенче: Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмне уçнă чухнехи самантсем.**

Професси ăсталăхĕн конкурсĕ

# Ăсталăх кăтартрĕ



2008 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче Шупашкар хулинче «Чăваш Республикин ĕç сыхлавĕн 2007 çулхи чи лайăх специалисчĕ» професси ăсталăх конкурсĕн финал ăмăртăвĕ иртрĕ. Ку мероприятие пирĕн районтан Олег Сергеевич Захаров хутшăнчĕ. Вăл Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхран. Ĕç сыхлавĕн инженерĕ пулса ĕçлет, районти конкурс итогĕсем тăрăх пĕрремĕш тапхăр çĕнтерÿçи пулса тăнăччĕ.

Республика конкурсĕн программинче çак ыйтусем пулнă:

1. Тĕрлĕ пĕлÿ шайĕ енĕпе теори ыйтăвĕсемпе тест ирттересси.

2. Практика заданийĕсем:

– производствăри инкексене тата професси енĕпе чирленин тĕслĕхĕсене пăхса тухасси;

– ĕç условийĕсене кура ĕç вырăнĕсене аттестацилесси;

– инкексенче пĕрремĕш медицина пулăшăвĕ парасси;

– ĕç сыхлавĕ енĕпе тавлашуллă тата стандартлă мар лару-тăрăва татса парасси, пушар сÿнтермелли пуçламăш хатĕрсемпе усă курасси.

О.С. Захаров пур заданисене пурнăçларĕ, хăйĕн ăсталăхĕ пысăк пулнине кăтартса пачĕ. Çавна май вăл Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин хаклă парнине тивĕçрĕ.

Çавна та каласа хăварас пулать. О.С. Захаров Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче ĕç сыхлавĕн инженерĕ пулса 6 çул ытла ĕçлет. Ку хуçалăхра юлашки çулсенче производствăра пĕр инкек те пулман. Кунта ĕç сыхлавĕ енĕпе мероприятисем ирттерме, ĕç тумтирĕ туянма тата харпăр хăйне хÿтĕлемелли хатĕрсем валли укçа-тенкĕ вăхăтра уйăрса параççĕ.

**А. КУЗЬМИН,**
**Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хÿтлĕх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

Çуллахи каникул кунĕсем

# Асра юлнă кун

Акă лагерьти юлашки кунсем те иртсе кайрĕç. 18 кун ним сисĕнмесĕр питĕ хăвăрт иртрĕ. Мĕнле кăна мероприяти ирттермерĕмĕр пуль эпир хамăрăн сывлăха çирĕплетмелли «Хĕвел» лагерьте. Апла пулин те Шупашкара кайса килни пурин асĕнче те юлчĕ.

Мĕнле илемленсе кайнă пирĕн республикăн тĕп хули! Уйрăмах пире залив хĕрринче килĕшрĕ. Унта эпир тĕрлĕ каруселсемпе, катамаранпа ярăнтăмăр. Кайран Лакрей вăрманĕнче пултăмăр, тавралăха кăтартакан «урапапа» ярăнтăмăр.

Кайран вара Трактор тăвакансен керменĕнче чăваш çăлтăрĕсен эстрада концертне пăхрăмăр. Унта пире уйрăмах Петр Садовниковăн, Александр Васильевăн, Александр Ильинăн, Алексей Шадриковăн тата ыттисен юррисем килĕшрĕç. Кулăш ăсти Виктор Петров та куракансене савăнтарчĕ.

**Оксана САДОВНИКОВА.**

Атапай шкулĕ.

Республика кунне халалланă

# Уявсем ăнăçлă иртнĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Форум шайĕнчи куравсене (Экспо-Контур, MEGAGALAXY, Оперăпа балет театрĕ, «Мега-Молл» центр, Наци банкĕ - 354 организаци экспоначĕ), конгресси мероприятийĕсенче 200 килĕшĕве, инвестици килĕшĕвне, протоколсене 120 миллиард тенкĕлĕх ытла алă пуснă:

Чăваш Ен бизнесĕн представителĕсем инвестицин уйрăм проекчĕсемпе Çĕнĕ Шупашкарти стройиндустрин пушă лаптăкĕсенче строительство материалĕсен, конструкцисен производствине тума;

Япони компанийĕсем Шупашкарăн кăнтăр-хĕвел анăç районĕнче строительство комплексне проектлама (BAN International Inc., Tokio);

Шупашкарта хальхи заводсен комплексĕнче строительство материалĕсем хатĕрлекен индустри технопаркне тума «КРОСТ» производствăпа строительство фирми (Мускав) килĕшнĕ т. ыт. те.

Унсăр пуçне Республика кунĕнче:

Пĕтĕм Раççей халăх пултарулăхĕн «Раççей çăл куçĕсем» XVI фестивальне Раççей Федерацийĕн 31 регионĕнчен, 3 ют çĕршывран (Беларуç Республики, Эрмен Республики, Бельги королевстви) 39 пултарулăх коллективĕ - пĕтĕмпе 600 çын ытла хутшăннă.

«Раççей ăстисем» декораци-прикладной искусство ăстисен Пĕтĕм Раççейри VI конкурсне Раççейĕн 18 регионĕнчен 64 ăста хутшăннă.

«Раççей юррисем» фестиваль-марафона Раççей халăх артистки Надежда Бабкина ертсе пынипе 11 пултарулăх коллективĕ хутшăннă.

Çичĕ кун хушшинче, çĕртмен 18-24-мĕшĕсенче, уяв мероприятийĕсенче Шупашкарта 264 пин çын пулнă, Муркаш, Йĕпреç районĕсенче - 50 пин çын ытла.

Президент Республика кунĕ ячĕпе ирттернĕ мероприятисене хутшăннисене – Чăваш Ене малалла аталанма пысăк вăй хунисене ăшшăн тав турĕ.

ГИБДД пĕлтерет

# Водительсем валли

***Июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса руль умĕнче çÿрекенсем валли çĕнĕ правилăсем вăя кĕчĕç. Пĕтĕмĕшле илсен вĕсем правилăсене пăсакансем тĕлĕшпе административлă айăплав мерисене ÿстернипе çыхăннă.***

### РУЛЬ УМĔНЧЕ ĔÇМЕ ЮРАМАСТЬ

Çапла вара июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса законодательствăра юнри алкоголь шайĕ мĕн чухлĕ пулнин нормине вăя кĕрет. Вăл 0,3 промиллепе танлашать. Сывласа кăларакан сывлăшра вара 0,15 миллигрампа.

Çак нормăсем руль умĕнче ĕçмеллине пачах пĕлтермеççĕ. Вĕсем руль умĕнче чăннипех кам ÿсĕр пулнине тата унăн нормине çул çинче тÿрех палăртма кăна.

Ыйту тухса тăрать: 0,3 промилле ан пултăр тесен мĕн чухлĕ ĕçме юрать? Нимĕн чухлĕ те. Руль умĕнче ĕçме юрамасть.

Тепĕр ыйту тухса тăрать: мĕншĕн çĕнĕ правилăсене ĕçе кĕртеççĕ-ха? Норма малтанхи пекех юлсан лайăх мар-и – норма ноль тулли те ноль вуннăмĕш.

Ку нормăна вара Сывлăха сыхлас ĕç министерстви палăртнă. Вăл айăплă мар çынсене айăплаттарасшăн мар. Ĕçĕ çавăнта. Кашни çын организмĕнчех эндокринлă алкоголь пур. Ку вăл йÿçес процеспа çыхăннă. Енчен те çын кефир е квас ĕçес пулсан, алкоголь шайĕ татах ÿсет. 0,3 промилле вара каварлă, анчах та алкогольсĕр продуктсемпе усă курма май парĕ.

### ЎСĔРРИНЕ ПРИБОРПАХ ПАЛĂРТĔÇ

Унчченхи вăхăтра çын руль умĕнче ÿсĕр пулнине çирĕплетес пулсан çынна медицина тĕрĕслевĕ ирттерни кирлĕ пулнă. Халĕ ун пек кирлĕлĕх çухалать. Çын руль умĕнче ÿсĕр пулнине вырăнтах палăртĕç. Çакна валли ятарлă приборсем пур. Прибор кăтартăвĕпе килĕшместĕр пулсан вара медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухма ирĕк пур.

Енчен те прибор кăтартăвĕсем хыççăн инспекторăн тĕрлĕ енлĕ шухăшлавсем пулсан, вăл водителе медицина тĕрĕслевĕн экспертизине яма пултарать. Унта понятойсем икĕ çынран кая пулмалла мар.

Водитель ÿсĕр е ÿсĕр мар пулнине, инспектор е врач палăртнă пулин те, йышăнăва суд çирĕплетет. 0,3 промилле чухлĕ норма алкоголь пачах ĕçме юраманнине пĕлтерет. Çакна Наркологи институтĕнче те тĕпчесе пĕлнĕ. Пĕр кĕленче сăра е 40 грамм водка, пĕр бокал вино ĕçни (пĕтĕмĕшле 80 грама çитсен) 0,5 промилле чухлĕ пулаççĕ, 0,3 промиллепе 60–70 минут хушшинче танлашаççĕ. 0,3 промилле вара – пĕр е икĕ çăвар сăра сыпни.

Йывăр преступленисемпе çыхăннă ĕçсенче кăна юн анализĕнче 0,5 промилле чухлĕ алкоголь пулма пултарать.

### ÇУЛСЕМ ÇИНЧЕ ФОТО-ТАТА ВИДЕОФИКАЦАЦИ ПРИБОРĔСЕМ ПУЛĔÇ

Çулсем çинче çул-йĕр правилисене пăснине çирĕплетекен приборсем вырнаçтарса тухма палăртнă. Вĕсем çул-йĕр правилине пăснă кирек епле тĕслĕхе те шута илĕç. Айăплисен вара ответ тытма тивĕ. Вĕсене штрафсем ярса парĕç.

### ВОДИТЕЛЬ ЎСĔР Е ÇУК?

Июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса водитель ÿсĕр е ÿсĕр мар пулнине инспектор хăех палăртма пултарать. «Алкотестер» тесе ят панă ку прибора халăхра. Тĕрĕссипе вара кам чăннипех ÿсĕррине уçса пама 0,3 промилле тесе палăртнă.

### АВТОМАШИНĂНА ĂÇТА ВЫРНАÇТАРМАЛЛА-ШИ?

Ку енĕпе автомашина хуçисене кăштах çăмăллăх кĕтет. Малашне автомашинăна юраман вырăнта лартса хăварнăшăн ытлашши тÿлемелле пулмасть. Эвакуаципе усă курнин тата сыхласа усранин пĕрремĕш талăкĕ тÿлевсĕр пулаççĕ.

### СТРАХОВАНИ ПИРКИ МАНМАЛЛА МАР

Страхламан транспортпа усă курма юрамасть. Йĕркене пăссан вара регистраци знакĕсене илсе юлма пултараççĕ. Кун пек айăплав вăраланкан япаласем ытлашши кăларакан е ытлашши шав кăларакан автомашинăсен хуçисене те кĕтет.

***Тĕрĕссипе каласан, çул-йĕр çÿрессин хăрушсăрлăх правилисенче улшăнусем татах чылай. Вĕсемпе «Российская газета» хаçатăн июнĕн 26-мĕшĕнчи номерĕнче паллашма май пур.***